Çыру йĕрĕпе

# Валоризаци пурин те пĕр пек пулмасть

***Калаçăва çавăнтан пуçламалла пулĕ. Январĕн 19-мĕшĕнче РФ Пенси фончĕн районти управленийĕнче селекторлă пресс-конференци иртрĕ. Унта «Союз пенсионеров России» обществăлла организаци представителĕсем, республикăри тата районсенчи массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсем хутшăнчĕç. Тӳрĕ калаçура РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн управляющийĕ Роза КОНДРАТЬЕВА пенсисене валоризацилессин итогĕсем, социаллă хушма тӳлевсем парасси пирки чарăнса тăчĕ. Тĕрлĕрен ыйтусем унта сахал мар пулчĕç, вĕсем çине Р. Кондратьева тулли хуравсем пачĕ.***

Халĕ вара тепĕр ыйту патне таврăнар. Район хаçачĕн редакцине шăпах çак кунсенче Юнкă ялĕнче пурăнакан 1919 çулта çуралнă Анна Ивановна Фроловаран çыру килнĕччĕ. Вăл та валоризаци пиркиех сăмах хускатать. Ăнланмалларах пултăр тесе çырăва пĕтĕмĕшлех улăштармасăр илсе кăтартатпăр:

**«Сире чăрмантарнăшăн каçару ыйтатăп. Январь уйăхĕнче пенси илнĕ хыççăн валоризаци йĕркипе пенси çумне 463 тенкĕ хушăннă, куншăн тавтапуç – пире манманшăн.**

**Анчах та эпир пенси оформлять тунă чухне пирĕнтен никам та нимĕн те ыйтман, колхоз правленийĕнчи бухгалтер-работниксем ĕç кĕнеки тăрăх района сведенисем тăратнă та ĕçĕ те пĕтнĕ.**

**Анчах та самана улшăнсах пырать. Мĕншĕн-ха ĕмĕрĕпе ĕçлесен те пенси çумне кулăшла хушса тӳлеççĕ. Хамăн ĕмĕрте 91 çул хушшинче колхоз тунине те, мĕнле çаратса пĕтернине те курса тăтăм.**

**Эпĕ Юнкăра колхоз йĕркеленине те питĕ лайăх астăватăп. Атте-аннесемпе 1932 çулчченех колхозра ĕçлеме пуçласа. Ăна ĕнентерме сыхланса юлнă сăн ӳкерчĕкпе те çирĕплетме пултаратăп.**

**1935 çулта Мăн Сĕнтĕр райĕçтăвкомĕн çĕр ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕн Иван Никитич Никитинăн хушăвĕпе вăрлăх лабораторийĕнче ĕçлеме хăнăхма Мария Гурьевна Фроловапа иксĕмĕре Шупашкара 2 эрнелĕхе вĕренме ячĕç. Ун чухне манăн хушамат Бархаткина пулнă. Ун хыççăн Мăн Сĕнтĕрти вăрлăх лабораторийĕнче виçĕ çул ĕçленĕ. Сăмах май, район хаçачĕ çинче те пирĕн сăн ӳкерчĕксем пулнă. Мухтанмасăрах çыратăп.**

**1938 çулта качча тухнă хыççăн каллех колхозра ĕçлеме пуçланă. Ун чухне пĕчĕк колхозсем пулнă. Вăрçă пĕтнĕ хыççăн кăна колхозсем пысăкланнă. Анчах та манăн ĕç стажне 1941 çултан кăна çырнă. Манран никам та нимĕн те ыйтман. Манăн ĕç стажĕ ахалех çитни пирки пĕлтерчĕç колхоз бухгалтерĕсем.**

**Эпир вăрçă вăхăтĕнче çĕрĕн-кунĕн тӳлевсĕр ĕçленĕ. Тырă вырнă, пуçтарнă, хĕлĕпе лашапа патшалăх поставки шучĕпе тырă турттарнă, Сăр юхан шывĕ хĕррипе окоп-блиндажсем те чавнă. 35–40 градус сивĕре те шăнса вилмен. Чăлха-нуски фронта валли çĕрĕпех çыхнă, ачипăчине те пăхнă.**

**Фронтран таврăннă инвалид упăшкапа та çулталăк кăна пурăнтăм. Вăл ура гангренине пула вăхăтсăр çĕре кĕчĕ.**

**Халĕ пурăнакан вăрçă участникĕсене пенси чылай хушса пачĕç. Кунсăр пуçне тĕрлĕрен çăмăллăхсем те пур. Тылра тата вăрçă хыççăн ĕçленĕ хĕрарăмсен пенсийĕ вара çав тери пĕчĕк. Тӳлевсĕр ĕçленине шута илмеççĕ пулмалла. Халĕ вара валоризаципе те пенси нумай хушăнмарĕ. Вăрçă çулĕсенче тата вăрçă хыççăн ĕçленĕ çынсенне пенси çумне кăштах хушса пама май çукши? Вĕсем сахаллансах юлчĕç».**

Халĕ вара РФ Пенси Фончĕн районти управленийĕ районта валоризаци епле иртни пирки ăнлантарса панипе паллашма сĕнетпĕр. Çакă вăл çӳлте асăннă çыру авторĕшĕн те, ытти хаçат вулакансемшĕн те усăллă пулĕ тесе шутлатпăр:

– Малтанах валоризаци вăл мĕн пулни пирки чарăнса тăмалла. Валоризаци вăл – граждансем пенси реформи пуçăниччен хывнă ĕç вкладне çĕнĕрен шута илсе хаклани. Вăл шутра совет самани тапхăрĕнчине те. Граждансен 2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕччченхи тапхăрта пухăннă пенси капиталне ĕç стажĕпе ĕç укçи виçине кура 10 процент ӳстерне. Унсăр пуçне 1991 çулхиччченхи кашни çулталăк стажĕшĕн 1 процент хушса панă. Халĕ пĕтĕмĕшле ĕç стажĕн чи пысăк виçи мĕн чухлĕ пулмаллине палăртман. Унччен вара пенси виçисене палăртнă чухне хĕрарăмсен 40 çулхи, арçынсен 45 çулхи ĕç стажĕсене кăна шута илнĕ. Çапла вара валоризаци иртнерĕ май пенси мĕн чухлĕ ӳсесси ĕç стажĕнчен тата 2002 çулчченхи ĕç укçи виçинчен килет. Апла пулсан пенсионерăн ĕç стажĕ тата ĕç укçи виçи мĕн чухлĕ пысăкрах, валоризаци калăпăшĕ те çавăн чухлĕ нумайрах пулать.

Январь уйăхĕнчи пенсисене илнĕ май пенсионерсенчен чылайăшĕ хăйсен пенси виçисем валоризаци мелĕпе мĕн чухлĕ ӳснине пĕр-пĕринпе танлаштарма тытăнчĕ. Хăшĕсен вĕсем нумайрах, теприсен сахалрах. Тĕрлĕ ыйту çуратать çакă. Çавна палăртмалла. Валоризаци мелĕпе пенси виçи ӳсесси кашни пенсионерăн хăйĕн уйрăм. Вăл пурин те пĕр пек пулма пултараймасть. Тепĕр хут палăртнă пулăттăм: валоризаципе пенси мĕн чухлĕ ӳсесси 2002 çулчченхи ĕç стажĕпе ĕç укçи виçинчен килет.

Тепĕр ыйту – ĕç стажне çирĕплетекен документ пирки. Чи малтанах ку вăл ĕç кĕнеки пулса тăрать. Енчен те вара ĕç кĕнеки çук пулсан е ĕç стажне çирĕплетсе унта хăш-пĕр ĕç тапхăрĕсем пирки çырса хунисем пулмасан, справкăсене, приказсенчен çырса илнисене, лицевой счетсене, ĕç укçи тӳленин ведомоçĕсене, удостоверенисене, характеристикăсене, ĕç килĕшĕвĕсене пурнăçлани пирки çырса хунисене, служба тата формуляр списокĕсене, промысла тата инвалидсен кооператив артелĕсен членĕсен кĕнекисене, ĕçленĕ вăхăта кăтартакан ытти документсене те шута илеççĕ. Ĕç стажне çирĕплетме асăннă документсем те çук пулсан, профсоюзсен членĕн билечĕсене тата расчет кĕнекисене, профсоюз членĕн учет карточкисене те йышăнаççĕ.

Хăш-пĕр чухне çар ĕçĕсене, пушарсене, шыв илнине, çĕр чĕтреннине, аварисене, катастрофăсене тата ытти лару-тăрăва пула ĕç стажне çирĕплетсе паракан документсем пĕтме те пултарнă. Ун пек чухне ĕç выслугине кура тата çăмăллатнă майпа пенси илме тытăнма çав вăхăтра асăннă çынпа пĕр предприятире, учреждении, организацире, колхозра е ытти системăра ĕçленĕ икĕ çынран кая мар çирĕплетни кирлĕ.

Ытти çынсем кăтартса панипе ĕç стажне çирĕплетнĕ чухне гражданинăн хăйĕн заявленийĕпе пĕрле çак документсене пĕрле тăратмалла:

– стихийăллă инкек пулнă вырăнти патшалăх (муниципаллă) органĕ панă документ (инкек хăш çул, хăш уйăхра тата хăш кун пулнине, унăн характерне палăртмалла);

– ĕç пирки çыхăннă документсене шăпах çак инкеке пула çухатнине тата вĕсене çĕнĕрен хатĕрлеме май çуккине çирĕплетни пирки ĕç паракан е патшалăх (муниципаллă) органĕ панă документ;

– ĕçленĕ тапхăр пирки архив сведенийĕсем пулманни пирки архив учрежденийĕ е патшалăх (муниципаллă) органĕ панă справка.

Район администрацийĕнче

# Граждансенчен 123 çыру килчĕ

Район администрацине иртнĕ çул граждансенчен пĕтĕмпе 123 çыру килчĕ. 2008 çулта 100 çыру пулнăччĕ. Тăваттăмĕш кварталта ку хисеп 23 çырупа танлашрĕ. Унччченхи çул çырусем 31 пулнăччĕ е кăçал тăваттăмĕш кварталта çырусем килесси 74 процентпа танлашрĕ.

Çырусен характерне тата содержанине кура вĕсене пăхса тухма район администрацийĕн структура подразделенийĕсене ярса панă. Пурне те вĕсене контроле илнĕ.

Иртнĕ çулхи юлашки кварталта граждансенчен çырусем çак ыйтусемпе килнĕ:

– пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсем тĕлĕшпе – 6 çыру (26 процент);

– строительство комплексĕ енĕпе – 5 çыру (22 процент);

– коммуналлă тата йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессипе – 3 çыру (13 процент).

Пурăнмалли çурт-йĕрпе çыхăннă çырусенче çынсем «Кивĕ çурт-йĕр» программăпа килĕшӳллĕн çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатасси, нумай хваттерлĕ кивĕ çуртсенчи пурăнмалли условисем пирки сăмах хускатаççĕ, çурт-йĕр туянма пулăшма ыйтаççĕ. Строительство комплексĕн ыйтăвĕсем вара – çулсем, шыв сечĕсем тăвассипе, электропередача линийĕсем карассипе çыхăннисем.

Анализ туни çавна кăтартса парать. Çырусем ытларах Муркаш ял тăрăхĕн территорийĕнчен пулнă (7 çыру). Ильинка тата Ярапайкасси ял тăрăхĕсен территорийĕсенчен вара 3-шер çыру килчĕ.

Иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталта 8 çыру (34 процент) çӳлте тăракан организацисем урлă килчĕ. 6-шĕ вара коллективлă çырнăскерсем. Район администрацийĕн пуçлăхĕ хăй патĕнче 2009 çулхи тăваттăмĕш кварталта 34 çынна йышăннă.

Çулталăк итогĕсемпе илес пулсан, строительство комплексĕн ыйтăвĕсене хускатакан çырусем 24 (20 процент), агропромышленность комплексĕн ыйтăвĕсемпе çыхăннисем 13 (11 процент), коммуналлă тата йăла çăмăллăхĕсемпе тивĕçтерессипе çыхăннисем 12 (10 процент), патшалăх тата общество ыйтăвĕсене хускатаканнисем 11 (9 процент).

Çынсенчен çырусем килесси ӳснине шута илсе ку тĕлĕшпе район администрацийĕ пĕрлехи информаци кунĕсен мелĕпе туллин усă курма тăрăшать. Кунсăр пуçне район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсем ял тăрăхĕсене тухса граждансене хăйсем пурăнакан вырăнсенче йышăнассине те практикăлатпăр. Асăннă йышăну кунĕсенче граждансенчен 52 ыйту пулчĕ. Вĕсене татса парассипе туса ирттермелли мероприятисен планĕсене пăхса хунă та ĕнтĕ.

Кунпа пĕрлех район администрацийĕ уйăхсеренех выльăх-чĕрлĕх пăхакансен кунĕсене ирттерет. Çирĕплетнĕ графикпа килĕшӳллĕн ответлă ĕçченсем ял хуçалăх предприятийĕсен территорийĕсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисенче пулаççĕ, коллектив членĕсен актуаллă ыйтăвĕсене вырăнтах татса пама тăрăшаççĕ.

2009 çул итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май çавна каласа хăварас пулать. Пирĕн пата килнĕ çырусенчи ыйтусен 17 процентне тивĕçтерме май килчĕ. Çырусенче хускатакан ытти ыйтусем пирки вара авторсене тĕплĕн ăнлантарса панă.

**А. КРАСНОВ,**
**район администрацийĕн ĕçĕсен управляющийĕ.**

Тыл ĕçченĕ тата ĕç ветеранĕ

# Татьяна аппа 102 çул тултарчĕ

2010 çулхи январĕн 2-мĕшĕнче Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнĕ салтак мăшăрĕ, тыл ĕçченĕ тата ĕç ветеранĕ Татьяна Трифоновна Трифонова 102 çул тултарчĕ. Татьяна Трифоновнан пĕтĕм пурнăçĕ «Ударник» совхозпа çыхăннă. Вăл 4 ачине пăхса ӳстерсе воспитани панă, тепĕр хăр тăлăха ура çине тăратнă. Хальхи вăхăтра Татьяна Трифоновна хăйĕн хĕрĕпе Актай ялĕнче пурăнать. Хĕрĕ – Елизавета Ивановна Соловьева – хăйĕн пĕтĕм пурнăçне педагогика ĕçне панă. Хăй вăхăтĕнче ăна РСФСР халăха вĕрентес ĕç отличникĕн наградине тата «Хисеп Палли» орден та панă. Январĕн 8-мĕшĕнче вăл 78 çул тултарчĕ.

2010 çулхи январĕн 13-мĕшĕнче менелник çыннисене районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Петрова, «Çынсене социаллă пулăшу паракан районти центр» РГУ директорĕ О.В. Иванова, ветерансен районти канашĕн председателĕ М.В. Виноградова тата саккунсăр майпа политика репрессине лекнисен ассоциацийĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн председателĕ Н.П. Клементьев саламланă. Вĕсем ветерансене асăнмалăх парнесем тата район пуçлăхĕ ячĕпе салам хучĕсем панă. Çавăн пекех ветерансене нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, телей суннă.

**Хамăр инф.**

Обществăлла организацисенче

# Тивĕçтерет тесе хак пачĕç

Кăçалхи январĕн 19-мĕшĕнче культура ĕçченĕсен районти профсоюз организацийĕн черетлĕ 16-мĕш отчетпа суйлав конференцийĕ иртрĕ. Конференцие культурăра ĕçлекенсенчен 26 делегат суйланă.

Çавна каласа хăвармалла. Культура ĕçченĕсен районти профсоюз организацине 4 пуçламăш профсоюз организацийĕ кĕрет. Кусем вĕсем клуб ĕçченĕсен, библиотека ĕçченĕсен, ачасен Муркашри искусство шкулĕн ĕçченĕсен, Чăваш Республикинчи «Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕнче ĕçлекенсен пуçламăш организацийĕсем. Учетра пĕтĕмпе 184 профсоюз членĕ шутланать.

Профсоюз организацийĕн отчетлă 5 çулхи тапхăрти ĕçĕ-хĕлĕ пирки культура ĕçченĕсен профсоюз райкомĕн председателĕ Е.И. Налимова отчетлă доклад туса пачĕ. Вăл палăртнă тăрăх, профсоюз ертсе пыракан органсемпе тачă çыхăнса ĕçлесе пыма тăрăшать. Вĕсем ăнланулăхпа палăрса тăраççĕ, профсоюз организацине ĕçре пулăшакан тесе шутлаççĕ. Кунпа пĕрлех докладчик ял тăрăхĕсемпе культура ĕçченĕсен профсоюз организацийĕсем хушшинче коллективлă килĕшӳсем тăвас ĕçе активлăрах туса пыма сĕнчĕ.



Конференци ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева, культура ĕçченĕсен профсоюзĕн Чăваш рескомĕн председателĕ С.В. Демидова тата пуçламăш организацисен председателĕсем те хутшăнчĕç. Делегатсемпе чĕннĕ хăнасем культура ĕçченĕсен профсоюз райкомĕн ĕçне тивĕçтерет тесе хак пачĕç. Профсоюз райкомĕн председателĕ пулма каллех Е.И. Налимована шанчĕç. Вăл ăна 2015 çулхи январь уйăхĕччен ертсе пырĕ.

**Хамăр инф.**

**Сăн ӳкерчĕкре: конференци пынă вăхăтра.**

Сăвă йĕркисен ăсти

# Тĕп тема – тăван ен

***Альберт Николаевич Николаев-Кӳльвар Шупашкар районĕнчи Пăлатка ялĕнчен. 1939 çулта çуралнă. 1975 çултанпа Сочи хулинче пурăнать, сăвăсем çырма кăмăллать. Хăй вăхăтĕнче вăл 1966 çулта районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатра литература сотрудникĕ пулса та ĕçленĕ. Вулакансене паян авторăн «Пăлатка çĕршывĕ» кĕнекинчи пĕр сăввипе паллашма сĕнетпĕр.***

## Ĕмĕт

Йĕпе-сапа е хĕллехи тăман-и
Хуса кĕртсен мана ăш кĕтесе,
Самантранах тӳпе кăшт уçăлман-и?
Тухса пăхсам, тет ĕмĕт хистесе.
Е хăш чухне вĕçет-и шухă ыйăх,
Тăратăп эп, килмен-ха кăвак çут.
Çуртсем çинче çӳрет хуралçă-уйăх,
Çӳрет пĕччен, тем тытнăн ырă шут.
Анса виçет вăл çутă утма çулăн
Çара ура пек пĕчĕк йĕррине.
Шуса ларать ман çумарах хăюллăн,
Тытса çĕклет пуласлăх картине.
Ун пек чухне куратăп эп, чăнах та,
Çав пĕчĕк çутă утма çул çинче,
Ача чухнех çуралнă шӳт-юмах та
Тăрать сывах чăн пурнăç умĕнче.

Тав сăмахĕ

# Чунĕсене парса тăрăшаççĕ

***Район хаçачĕн декабрĕн 16-мĕшĕнче тухнă номерĕнче Мăн Сĕнтĕрти инвалидсемпе ватă çынсен çуртĕнче пурăнакансем кунта вăй хуракан социаллă ĕçченсене тав сăмахĕ каласа çырнăччĕ. Чăннипех вĕсем тав сăмахне тивĕçлĕ. Çавна май манăн çак йĕркесене пичетлеме ыйтас килет:***

Эпĕ ача чух малтан
Ваттисен çуртсем пулман.
Ватă çынсем час-часах
Çӳретчĕç ыйткаласа.
Халь ватă çын хисепре,
Тăрăшать уншăн собес.
Хăтлă çурт та уйăрать,
Тăлăха, ватта пухать.
Кунта ĕçлекеннисем –
Чăн-чăнах пирĕштисем,
Людмила ертӳçĕнех
Йăл кулли тăрать мĕне.
Кинемей, эс ан кулян,
Мучи те ан пăшăрхан.
Ветеран, эс ан вăтан,
Эпир пурте пĕр тăван.

**Любовь РОМАНОВА.**